# НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН

## Яшсене вăрçăран Турă сыхлатăр

***Вăрçă куççуль юхнипе, каялла таврăйми çухатусем пулнипе çыхăннине кашниех ăнланатпăр. Хамăр ача чухне çакна эпир кĕнекере тата хаçат-журналта вуласа çеç пĕлнĕ, кинофильмра курнă, анчах... Вăхăт иртсен çавăн чухнехи шăпăрлансем те Тăван çĕршыв интересĕсене хӳтĕлесе алла автомат тытасса кам шутланă-ха? «Никама та манман, нимĕн те манăçман» кăларăма хатĕрленĕ май инçетри Афганистан Республикинче интернационалист тивĕçне пурнăçланă Юрий Цветковпа тĕл пултăм. Хамăр калаçура салтак пурнăçне, арçын тивĕçне сӳтсе яврăмăр.***

**– Юрий Поликарпович, хăвăр ачалăхра вăрçă вут-çулăмĕ сире те пырса тивесси пирки эсир шутлама пултарнă-и?**

– Çук паллах. Пире атте-анне те, учительсем те Тăван çĕршыва çирĕп юратма вĕрентсе ӳстернĕ. Йывăрлăхсене епле çĕнмеллине эпир ачаран кĕнекесем урлă, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннисем каласа панинчен ăша хывса ӳснĕ. Çакă алла автомат тытма тивсен те мана питĕ пулăшрĕ.

**– Хăш шкулта вĕреннĕ-ха эсир? Ăçтан пурнăç çулĕ çине тухнă? Вăрçăра чух тăван шкул тăтăшах асраччĕ-и?**

– Чуна питĕ çывăх ыйтусене хускататăр эсир. Эпĕ Мăн Сĕнтĕрте çуралса ӳснĕ, кунти вăтам шкултанах 1986 çулта ăнăçлă вĕренсе тухрăм. Атте çар службине пулнă май тăтăшах салтак пурнăçĕ çинчен каласа паратчĕ, мана уйрăмах çирĕп воспитани парассишĕн тăрăшатчĕ. Физкультурăпа туслă пулассине самантлăха та кун йĕркинчен кăлармастчĕ. Шкулта манăн, физкультура урокĕсемпе спорт занятийĕсемсĕр пуçне, уйăрнă предметсем пулман. Кашнинпех вăй çитнĕ чухлĕ ĕлкĕрсе пыма тăрăшаттăм. Мирлĕ пурнăçра таса-сывă ӳсрĕмĕр, вăтам пĕлӳ илтĕмĕр, малашлăх тĕллевĕсем палăртрăмăр. Астăватăп-ха, вăл вăхăтри



çĕршер-пиншер арçын ача пекех эпĕ те пушă вăхăтра телевизорпа вăрçă çинчен киносем курма кăмăллаттăм. Юратнă герой тăшман аллинчен амансан е пуçне хурсан чунпа макăрни те пĕрре çеç мар пулнă. «Вăрçăсăр пурăнма пулмасть-и вара?» – шутлаттăм кун пек вăхăтсенче ăшăмра. Анчах çав самантсенче шутланă-и-ха эпĕ шăпа хама та вăрçă çулăмĕ витĕр кăларасса? Çук. Анчах пурнăç урапи саккăрла çаптарать тени ман тĕлĕшпе те ума тăчĕ.

**– Ăçтан пуçланчĕ санăн Афганистан? Çав вăрçа кĕме хатĕрлерĕç-и сире? Ăнсăрт утăм пулмарĕ-и вăл?**

– Курман чух вăрçă питех те хăрушă тесе шутлама пĕлмен. Вăтам шкултан ăнăçлă вĕренсе тухсан малалла вĕренсе ятарлă е аслă пĕлӳ илессине çар службинчен таврăнсан валли хăвартăм. Çапла вара 1986 çулхи кĕркунне салтак кайма ят тухсан призывран пăрăнса тăмарăм: кутамкка пуçтартăм та тăвансемпе, ял çыннисемпе, тантăшсемпе сывпуллашса çар комиссариатне тухса утрăм. Вăл вăхăтра Афганистан кашнин хăлхинчех тăратчĕ. Эпир ку вăрçă пирĕнтен пăрăнса иртет тесе шутлаттăмăр, анчах...

Пирĕн ушкăн действительнăй çар службине Вăтам Азири Хĕрлĕ ялавлă чикĕ хурал округне лекрĕ. Чикĕ леш енче сăрт-ту хушшипе бомба-снаряд çурăлни илтĕнни, чикĕ урлă «Тиев-200» самолетсем вĕçсе иртни кунта лăпкăлăх катара тăнине çирĕплететчĕ. Тин çеç гражданкăран килнĕ çамрăксене те автомат тытма, унпа пеме хăнăхтарни ахаль пулмасса ăнланаттăмăр эпир. Çав вăхăтрах пирĕн хушăра хамăр умри çар операцийĕсенчен пăрăнакан пулмарĕ.

**– Юрий Поликарпович, мĕн вăхăт хатĕрлерĕç çамрăк салтаксене çар операцийĕсене хутшăнма?**

– Тĕллевлĕ вĕренӳ 3 уйăха тăсăлчĕ. Çак хушăра вăрçăн чылай вăрттăнлăхне алла илтĕмĕр. Çăмăл марччĕ, анчах пирĕнтен пĕр салтак та умри йывăрлăхсенчен хăранине палăртмарĕ. Вĕренӳ вĕçленнĕ хыççăн пирĕн çар чаçне Афганистан территорийĕнчи çар операцийĕсене хутшăнма юханшыв урлă каçарса кайма приказ пулчĕ. «Хăратăп. Эпĕ каймастăп. Мана юрамасть», – тесе нăйкăшса ларакан пирĕн хушăмăрта пулмарĕ. Çапла вара пурте пĕр тĕллевпе вăрçă вут-çулăмĕ ăшне ура ярса пусрăмăр... Пирĕн призывăн Афганистан вăрçине вĕçлесе тухмалла пулассипирки шутланă-и-ха эпир ун чухне? Çук. Анчах шăпа çырнинчен иртеймĕн. Пирĕн дембель 1988 çулхи кĕркунне пулмаллаччĕ. Çак вăхăтра пурсăмăр та пирĕн çарсене Афганистанран кăларассине пĕлеттĕмĕр. Çавăнпа та командирсем çамрăксене вăрçа тек кĕртес çукки, пирĕнех çар операцийĕсене вĕçлеме тивесси пирки каласан никам та службăна тăсассине хирĕçлемерĕ. Çапла вара 1989 çулхи нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнче комбатпа рядовой пĕрле пулса Афганистан Республикинче 10 çул пынă вăрçăна вĕçлесе тухрăмăр. Манăн служба та çак кун вĕçленчĕ, киле таврăнма приказ пулчĕ.

Ют çĕршывра иртнернĕ 23 уйăхра чуллă çĕр çинче çывăрни, юлташсене сыхласа çĕрĕпе нарядра тăни, ирпе пĕрле апатланнă юлташпа каçхи апатчен яланлăхах сывпуллашни çулсем иртсен те асран тухмасçĕ. Хамăр салтаксене юлашки çула ăсатнă чух ура чĕтрени тата куçăм шывланни, тăван çĕршывран килнĕ çырăва взвочĕпе вулани ĕнерхи пекех асра. Çар операцийĕнче юлташа хӳтĕлес тĕллев малта пулни паян та тĕлĕкре тĕлленет. Черетлĕ çар операцийĕ хыççăн мирлĕ пурнăçа таврăнсан вăрçăран-инкекрен сыхланса хăйсенчен мĕн килнине йăлтах тума сăмах пани – вăрçăри салтак ыррине çеç шанни. Ырă ĕмĕтсемпе юлташсене паллаштарни те вăрçăри хуйхă-суйхăна самантлăха иккĕмĕш вырăна хăваратчĕ.

**– Салтак чĕлхипе каласан «гражданка» сана епле кĕтсе илчĕ?**

– Ачаран çĕр ĕçĕпе туслă ӳснĕрен тата водитель специальноçне алла илнĕрен малтанах «Сундырский» хуçалăхра водитель пулса вăй хутăм. Хыççăн хам тимленнипех ачалăхри ĕмĕте пурнăçа кĕртрĕм: И. Яковлев ячĕллĕ Чăваш педагогика институтĕнчен вĕренсе тухрăм. Аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн нумай çул Çĕнĕ Шупашкарти ГЭС çинчи пушар хуралĕнче службăра тăтăм. Вĕреннĕ тата ĕçленĕ хушăрах çемье çавăртăм. Пурнăçри йывăрлăхсене çĕнсе пырса мăшăрăмпа Зоя Николаевнăпа ывăлпа хĕр çуратса ӳстертĕмĕр.

Тĕрлĕ пулăмпа пуян пурнăç урапи тикĕссĕн кусать темелле. Анчах пирĕн районти 7 çамрăк çав вăрçăра паттăррăн пуçĕсене хучĕç. Вĕсем: А. Татаров, М. Самойлов, Н. Перцев, Ю. Тарасов, А. Порфирьев, Н. Михеев, В. Николаев. Вĕсен паттăрлăхне Москакассинчи палăк аса илтерсех тăрать. Ĕмĕрлĕх чыс вĕсене.

## Пилĕк ордена, пилĕк медале тивĕçнĕ

1950 çулхи сăн ӳкерчĕкре Алексей Прокопьевич Иванов капитана куратăр. Вăл Турай ял тăрăхĕнчи Çулав ялĕнче 1915 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче вăтам хресчен çемйинче çуралнă. 7 класлă пĕлӳ илнĕ хыççăн вăл Етĕрнери педагогика техникумне вĕренме кайнă. 1933 çулта каччă вырăнти «Урожай» колхоз счетоводĕнче ĕçлеме тытăннă. Тăрăшулăхпа пултарулăхне кура 1937 çулхи март уйăхĕнче ăна «Союзпечать» райбюро ертӳçи пулма шаннă. Анчах та вăл унта нумай ĕçлеймен, октябрĕн 10-мĕшĕнче вăхăт çитнипе çара тухса кайма тивнĕ.

Чи малтанах вăл çыхăну уйрăмĕн 45-мĕш уйрăм батальонĕн кĕçĕн командирĕсене хатĕрлекен шкулта пĕр çулталăк майлă вĕреннĕ, уйрăм командирĕн званине илнĕ. 1940 çулччен командир пулнă салтак вăхăт çитнипе саппаса тухнă.

Тăван тăрăха таврăнсан хастар яш районти ЦСУ-н участокри инспекторĕнче тăрăшнă. Анчах та вăл ку ĕçре те нумай вăхăт тытăнса тăрайман, ку хутĕнче вăрçă хирне тухса каймалла пулнă унăн.

Ăна НКВД çарĕн çыхăну уйрăмне ертсе пыма шаннă. Каярах вăл пĕлĕве Саратоври погранучилищĕре ӳстернĕ, çавăн пекех унăн çар ĕç ăсталăхĕ те ӳссе пынă. Взвод командирĕ Алексей Прокопьевич Белоруссии, Украина, Прибалтика тата ытти фронтра хĕрӳ çапăçусене хутшăннă. Вăрçă хирне малтанхи кунсенче кĕрсе мĕн тăшмана çапса аркатиччен – Аслă Çĕнтерӳччен – фронтра хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă, пĕр çапăçура та хастар командира тăшман пулли амантайман.

1945 çулхи январĕн 10-мĕшĕнче рота гварди капитанĕ Герашенко, гварди майорĕ Клисунов алă пусса çирĕплетнĕ документра Алексей Иванов пирки çапла çырнă: «Работая в кабельно-шестовой роте в должности командира взвода, проявил себя всесторонне развитым, грамотным, волевым офицером, решителен, инициативен, умеет быстро и четко проводить свое решение в жизнь. Материальную часть и военно-хозяйственную часть держит в образцовом состоянии. Взвод поставленные задачи выполняет успешно...». Çавăн пек пултарулла çын пулнă Çулав каччи. Совет çарĕсен тăшмана çапса аркатнă хыççăн та хастар командир тӳрех яла таврăнайман, çар ĕçне малалла тăснă.

Вăрçă хирĕнче çаврăнăçулăх, хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Алексей Прокопьевича Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе (1943 ç.,1945 ç.), Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин 1 тата 2 степеньлĕ орденĕсемпе (1944 ç, 1944 ç.) тата 4 медальпе чысланă.

1945 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче офицер чăваш хĕрĕпе Анна Афанасьевна Афанасьевăпа çемье çавăрнă. Ун чухне вăл çар ĕçĕнчен уйрăлман-ха, тепĕр икĕ



çултан вара вăл хăй çине тăрса ыйтнипе ăна саппаса кăларнă. Çав çулхине аслă ывăл Владимир çурални паллă. Тăван яла таврăнсан хастар салтак чи малтанах «Урожай» колхоз ĕçне кӳлĕннĕ, вăрçă вăхăтĕнче юхăннă хуçалăха ура çине тăратассишĕн тăрăшнă, ăна ответлă ĕçсем шаннă.

1949 çулхине ăна каллех Совет Çарĕн кадрне кĕртнĕ, линипе кабель взвочĕн командирĕ пулма çирĕплетнĕ. Çар çынни 1957 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕччен ответлă должноçсене йышăннă, çул çитнипе ăна çакăн хыççăн саппаса кăларнă. Çак тапхăрта та вăл тепĕр Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе (1956 ç.) «Çар тивĕçĕсемшĕн» медаль (1951 ç. 19.11) илме тивĕçнĕ.

## Вилĕм лагерĕ никама та хĕрхенмен

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕренпе 75 çул çитнине пăхмасăрах фашистсен çав вăхăтри çынсăрлăхĕ манăçа тухмастех. Саласпилс – Латвин тĕп хулинчен Ригăран 18 çухрăмра вырнаçнă хула. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче фашистла Германи Латвие оккупациленĕ çулсенче (1941 çулхи октябрьтен пуçласа 1944 çулхи кĕркуннеччен) кунта вилĕм концлагерĕ ĕçленĕ. Унăн тĕп хăрушлăхĕ – лагерьте кĕçĕн çулхи ачасене тытни, вĕсем çинче тĕрĕслевсем иртterни.

Асăннă лагере тунă чух фашистсен малтанах унта Латвинчи тата Европăри çĕршывсенчи еврейсене пуçтарас тĕллев пулнă. Фашистсем çакна пурнăçа кĕртнĕ-кĕртнех. Еврейсене вĕлерсе пĕтерсен, совет влаçне майлисене, Гитлер режимне хирĕççисене асаплантарма пуçланă. Фашистсем ватти-вĕттине те, кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмсене те, ачасене те шеллемен – пурне те çак вилĕм лагерьне пуçтарса хупнă.

Тыткăнрисем «вилĕм лагерĕ» тесе ят панă концлагере илсе пыракан авкаланчăк çул хĕррипе ӳсекен йывăçсем çынсăрлăха чăтса иртternĕ салтаксем пек вăрттăнлăха упранăн тураттисене усса ларăççĕ, çил варкăшĕпе шăппăн калаçаççĕ. Концлагерь ĕçленĕ çулсенче унпа иртекенсем ăна «юнлă çул» тесе ят панă. Ун тăрăх лагере чуптарса çеç илсе пыракансене эсэсовецсем çул çинчех юн тухиччен хĕненĕ, ыйтăсемпе тăллатарнă.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***